Нина Михайловна

**ЯКОВЛЕВА**



## ПИРЁН НИНА

Ҫапла чӗнеҫҫӗ ӑна Пысӑк Енккассинчи аслӑрах ҫулти ҫынсем. Вӑл вӗсен умӗнче ӳссе чӑваш халӑхӗ юратакан артистка пулса тӑче те, спектакльте-и, кинофильмра курсан-и, пирӗн Нина тесе сума суса калаҫҫӗ. Хӑйсен ялӗн чысне, чӑваш хӗрарӑмӗн чысне ҫӗкленӗшӗн, артисткӑна ҫулталӑкне пӗрре-и, тӑван яла килсен, ӑнсӑртран тӗл пулсан-и, кинемисемпе аппасем пуҫ тайсах саламлаҫҫӗ. «Сӑпаҫҫипах сана, Нина»,—теҫҫӗ вӗсем. —Эс вылякан спектакльсене курсан, эпир хамӑр пурнӑҫа ҫӗнӗрен аса илетпӗр, хурланатпӑр та хӑш чух, кулатпӑр та...»

Ача чухнех ашшӗсӗр тӑрса юлнӑ (ашшӗ вӑрҫӑра пуҫ хунӑ). 1940—1950 ҫулсенчи пурнӑҫ «пылакне» чылаях астивнӗ. Шкула кайнӑ, тӑван чӗлхене, литературӑна юратса вӗреннӗ, драмкружока ҫӳренӗ, спектакльсенче арҫын ача ролӗнчен пуҫласа амӑшӗ ролӗ таранах выляса пӑхнӑ. Кӗнеке вулама килӗштернӗ. Ыттисем курасран, кӑмака ҫинче вӑрттӑн вуласа выртнисем те пулнӑ. Вӑтам шкул пӗтерсен вара, 1956 ҫулта... Чим, хӑйне, артисткӑна итлер-ха:

«Пытармастӑп, ача чухнех эпир, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи выҫӑллӑ-тутӑллӑ ял ачисем, театр курсах ӳсмен, анчах илемлӗ литература, киносем чун-чӗрере темӗнле хавхаланулла туйӑм ҫурататчӗҫ, таҫта хамӑртан инҫетре пысӑк та хитре тӗнче—искусство тӗнчи—пуррине ӗненетретчӗҫ, ҫав тӗнчене чӗнетчӗҫ. Анчах ӑҫта-ха вӑл ҫав асамлӑ тӗнчене каймалли ҫул—эпир ӑна пӗлмен. Акӑ, калӑпӑр, аттестат илтӗн, ҫӗнӗ кӗпе тӑхӑнтӑн, ҫӑкӑр чикрӗн. Анчах хӑш сукмакпа утмалла сан? Хулана ларса каяс—ҫитсен вырнаҫма паспорту та ҫук вӗт-ха иҫмасса... Ҫапах та эпӗ хама чи телейлӗ ҫын тесе шутлатӑп, ма тесен шӑп ҫав вӑхӑтра темӗнле турӑ Шупашкарти академи театрӗн режиссерне К. И. Иванова пирӗн яла ҫавӑрса пынӑ. Пухӑнтӑмӑр

хайхи, ял ачи-пăчи çав шур пир пиншак, шур пир карттус тăхăннă, портфель тытнă çын тавра. Вăл пирĕнпе кашнинпе уйрăммăн калаçса пăхрĕ, кĕнеке вулаттарчĕ, ташлаттарчĕ, хуçкалантарчĕ, унтан мана Шупашкара пыма хатĕрленме хушса хăварчĕ. Хулара вара пире пысăк йышпа тĕрĕçлерĕç, пур енчен те пăхса шайлаштарса пăхкаларĕç. Эпĕ, улттăрах шкула кайнăскер, ун чухне пĕчĕкрехчĕ, пӳ-си енчен пăхсан та ялтилле каласан, хĕр пулса çитейменччĕ. Тахăшĕ иккеленсе те илчĕ курăнать.

—Ӳсет халь вăл, ӳссен, ан иккĕленĕр, шăпах театр çынни пулать ак,—терĕ Е. Бургулов художник. Çапла эпĕ Мускаври театр институчĕн чăваш студийĕн вĕренекенĕ пулса тăтăм. Манпа пĕрлех Н. Григорьева, А. Кутузова, Н. Смородинова, Н. Григорьев, В. Кудряшов, В. Яковлев тата ыттисем те пурччĕ».

Н. Яковлева аслă шкулта вĕреннĕ çулĕсене ăшшăн аса илет. В. А. Орлов, Д. Д. Данилов çинчен чĕререн тухакан сăмахсем калать вăл. Тăван чĕлхе илемне амăш чĕлхинчен, И. П. Петрова урокĕсенчен туйса çитĕннĕскер, тăван чĕлхе пуянлăхне, асамлăхне, пуплев çемçелĕхне Дмитрий Данилович Данилов парнелене ана. Ăна çеç-и, ытти нумай-нумай чăваш артистне çулăмлă чĕлхе панă вăл.

Акă, халĕ ĕнтĕ Нина Михайловна К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен академи драма театрĕн артистки. Ку ята илтсенех, темшĕн-çке мана «Кай, кай, Ивана» спектакльти Паша, «Праски инке хĕр парать» мыскарари Праски сăнарĕсем аса килеççе. Н. Яковлева вылякан ытти чылай спектакльсене те курнă-ха, асăннисем вара куç умĕнчех тăраççĕ. Пĕрре çеç мар курнă вĕсене, тепре те курма хатĕр. Мана çеç-и, ытти куракансене те йăлăхтармаççĕ вĕсем. «Кай, кай, Ивана» вунултă сезон сцена çинчен каймасть. Кашни çулах миçе спектакль кăтартнине шутласа та кăларма йывăр. «Праски инке хĕр парать» вара... Мыскарара Н. Яковлева вылявне çырса кăтартма сăмах та çитеймĕ. Кăна курас пулать. Тен, çак спектакльсен асамлăхĕ—пултаруллă артистсен ансамблĕ пулнинче! Çав ансамбльте Пашăпа Праски инке рольне вылякан Н. Яковлева пурри!

Рольсем, рольсем... Хăшĕ хаклăрах-ши, хăшĕ чуна çывăхрах-ши?

«Амăш сăнарĕ пуль,тет Нина Михайловна.—Амăш рольне вылянă чухне эпĕ яланах хамăн анне пирки шухăшлатăп. Анне тата ун çулĕнчи хĕрарăмсем. Вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăха чăтнă вĕсем, упăшкисене çухатса пурнăç лавне хăйсемех туртнă. Пире çитĕнтернĕ, çын тунă». Çак сăмахсене каланă чухне артистка куççуль кăлармасăр та тӳсеймест.

Н. Яковлева çуралнăранпа 50 çул тултарнине халалласа чăваш телевиденийĕ телекурăмпа киноочерк та кăтартнăччĕ. Нина Михайловнан амăшне те калаçтарчĕç унта. Амăш чунĕ пĕтĕмпех хĕрĕ çине куçнă иккен. Хăй икĕ ача амăшĕ халь Нина Михайловна, часах ак, мăнукне те утька сиктерĕ.

Нина Яковлева вылякан рольсенчен тепĕр паллăраххи вăл—«Чуна кивçен илеймĕн» спектакльти Мария. Чун тасалăхне çирĕп упракан Мария çынсен чунсăрлăхне, хăйшĕн çеç тăрăшакансене, туслăха таптакансене ăнланаймасть.

В. Шекспирăн «12-мĕш каç» мыскаринчи Виола, Ч. Айтматовăн «Ыйханăн хĕрлĕ тутăрлă тополĕмри» Асель, М. Горькин «Аркатакансем» спектакльти Надежда Монахова ролĕсем—пĕтĕм тĕнче драма-

тургинчи классикăлла произведенисенче Н. Яковлева калăпланă сăнарсем. Вĕсене куракансем ăшшăн йышăннă. Артистка пултарулăхне пысăк хак парса «Советская культура» хаçатра, «Театральная жизнь» журналта ырă сăмахсем çырнă.

«Яковлева пĕр кунрах жанр, стиль енчен, сăнарлăх тĕлĕшпе пĕр-пĕринчен йăлт уйрăлса тăракан рольсем выляма пултарать. Вăл хăйĕн иксĕлми пултарулăхĕпе, тĕрлĕ характерсем тума ăстипе, сăнара чун-чĕрипе туйма пултарса кăтартма пĕлнипе тĕлĕнтерет»,— хакланă РСФСР халăх артистки ĕç-хĕлне Галина Данилова театровед («Театральная жизнь», 1982, № 3).

Пысăк Енккассинчи вăтам шкулта вĕрентнĕ И. П. Петрова çапла калать: «Нина шкулта вĕреннĕ чухне «Нарспи» спектакль лартрăмăр. Астăваймастăп, темле рольччĕ унăн? Халĕ ак, Нина, «Нарспире» Сетнер амăшĕ сăнарне кăтартать. Икĕ çамрăк телейĕшĕн пăшăрханнине мĕнле ĕненмелле вылять». Спектакльти пĕр сценăна грампластинка çине çырнă. Унта Нина Яковлева калаçăвĕ те пур. Грампластинкăна чăваш чĕлхипе илемлĕ сăмахлăх вĕрентекенсем вилĕмсĕр поэмăна вĕреннĕ чухне ачасене итлеттерсе савăнтараççĕ. Нина Яковлева вулавне çырса илнĕ пластинкăсем тата та пур. Ытти артистсемпе танлаштарсан, темле шавсăр янăравлă сасăллă вăл. Çавăнпа-и, артистка калаçăвне итлеме питĕ кăмăллă.

Канăçсăр артист пурнăçĕ. Калама кăна канас. Хулари театр çуртĕнче сезон вĕçленсен республика тăрăх, чăвашсем пурăнакан ытти вырăнсене те тухса çÿремелле. Хăш чухне эрни-эрнипе килте пулаймастăн. Çулĕ-йĕрĕ, çанталăкĕ... Гастрольтен таврăнатăн та каллех театрта сезон пуçланать. Сцена çине сĕнĕ спектакльсем кăлармалла. Репетицисем, репетицисем. Нина Михайловна сумра шанчăклă тĕрек пулнишĕн савăнать. В. Н. Яковлев, унăн мăшăрĕ, театр ĕçне чунтан парăннă çын, режиссер, артист. Сцена çинче пĕрле выляна чух «Кай кай, Ивана»—Паша, Иван) хире-хирĕçле сăнарсем калăплама тивет те пурнăçра мĕнле-ши? Кăвакарчăнсем пек шăкăлтатса пурăнаççĕ, вĕсен икĕ ывăл çитĕннĕ кин те кĕртнĕ ĕнтĕ.

Нина Яковлева малашне те куракансене лайăх рольсемпе савăнтарĕ.